### Июлĕн 1-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ

# Ырă кăмăл сире пăрахса каймĕ

КООПЕРАЦИ ИСТОРИЙĔНЧЕН: Ссылкăна янă декабристсем 1831 çулта Байкал леш енче вырнаçнă Петров заводĕнче пуçласа потребительсен "Пысăк артель" обществине йĕркеленĕ. Çапла майпа вĕсем хăйсен пурнăçне çăмăллатма шутланă. Анчах та çакнашкал социаллă пысăк утăм тунă хыççăн Раççейре потребкоопераци юхăмĕ анлăн сарăлса каясси пирки вĕсем ун чух шутламан та. Ссылкăра та çынлăха çухатман декабристсен ырă пуçарăвĕ вара çак 175 çул хушшинче Раççейрен тухса ытти çĕршывсенчи кооператаци аталанăвĕ çине те пысăк витĕм кӳчĕ.

Пирĕн районта икĕ райпо (Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр) системи те ăнăçлă ĕçлесе пыни ял çыннисемшĕн курăмлă пулăм. Пĕтĕм тĕнчери коопераци кунĕ умĕн Муркаш райпоне çул тытрăм, кунти ĕçченсем ялăн социаллă аталанăвĕ çине мĕнле витĕм кӳнипе паллашас терĕм. Кĕске калаçурах районти потребкооперацин кашни утăмне кăтартма хĕнтерех, çапах та...

Муркаш райповĕ кăçалхи 6 уйăхра пĕтĕмпе 76 миллион тенкĕлĕх тавар сутса ял çыннисене куллен кирлĕ таварсемпе, хуçалăх тата строительство материалĕсемпе, йăлара кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтернĕ, çапла майпа ял хуçалăх производствинче е ялти социаллă сферăра вăй хуракансене кирлĕ тавара аякра шыраса вăхăт ирттермесĕр район аталанăвне çителĕклĕ тӳпе хывма пулăшнă. Хирти пĕччен çын салтак мар, тени рынок хутшăнăвĕсенче уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Çак чăнлăха Муркаш райповĕнче алла илнĕ те унпа кун-çул уттинчен юлмасăр утса пыраççĕ. Ӳсĕм çулĕпе пыма çапла пулмалла та. Çак шухăша Отарккăри куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче ĕçлекен Марина Ниткина заведующипе Нина Митрофанова сутуçă та **(сăн ӳкерчĕкре)** куллен пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Муркаш райповĕнче тавар сутассипе пĕрлех обществăлла апатлану системи те хăйĕн ĕçĕнче пуян опыт пухнă тытăм. Кунта вăй хуракан поварсем çур çулта çынсене 6 миллион та 900 пин тенкĕлĕх апат çитернĕ, хăйсен тулли сĕтелĕсемпе çынсене яланах хапăл пулнă, вĕсенче малашлăха пăхтаракан ырă туйăма çуратнă. Çак сăмахсем райцентрти "Радуга" кафе ĕçченĕсене те пырса тивеççĕ. Т. Колбасова аслă повар (обществăлла апатланури ĕç стажĕ 30 çул ытла) ертсе пыракан коллектив хăйсем патне апатланма пыракансен кăмăлне яланах малти вырăна хурать. Çакăнта никĕсленет те ĕнтĕ ĕç ăнăçăвĕ.



Кунта нумай çул поварта ĕçлекен Е.Систейкина, Л.Виноградова, Г.Яковлева, Е.Музыкова **(сăн ӳкерчĕкре хыçалта сулахайран сылтăмалла)** ĕçченсен тăрăшулăхне те палăртмалла. "Çук" сăмах çук вĕсен. Аслисен ӳсĕмне çамрăксем те аларан вĕçертес шутлă мар. Акă, коопераци техникумĕ хыççăн 5 çул кунта поварта ĕçлекен Нина Колбасова ( сăн ӳкерчĕкре малти ретре) халĕ каланин чăнлăхĕ. Кафе ĕçĕпе усă куракансене вăхăтлă пулăшу пама яланах хатĕр вăл.

Райпо ĕçĕ нумай енлĕ пулсан та ял çыннине тĕрлĕ таварпа тивĕçтерессине, ăна расна пулăшу парассине сутуçăсем малти вырăна хураççĕ. Тĕслĕхрен, юлашки çулсенче райпо тытăмĕнче аталанма пуçланă медицина тата ветеринари аптекисем – ял çыннисем тăтăш пулакан вырăнсем. Кăçалхи январь–июнь уйăхĕсенче вĕсем 2,2 миллион тенкĕлĕх сутă тунă.

Ытти енсемпе пĕрлех райпора хатĕрлев ĕçĕ те уксахламасть. Коллектив ку енпе тытса пыракан çул ултă уйăхра 6 миллион ытла тенкĕлĕх ĕç туса ирттерме май панă. Çак шутра 23 тонна аш-какай, 430 тонна сĕт, 10 тонна çĕтĕк, 30 тонна кивĕ хут т. ыт. те хатĕрлеме пултарнă. Каласа хăвармалла, халĕ асăннисемсĕр пуçне райпо халăхран чăх çăмарти, пыл, çăм, пахча çимĕç, выльăх тирĕ йышăнать. Халĕ кунта эмел курăкĕ пухас ĕç хĕрӳ тапхăрта. Çак ĕç ăнăçлăхĕ çине райпо ертӳçисем шкулсемпе тачă çыхăнса ĕçлени ырă витĕм кӳресси пирки иккĕленӳ çук.

Çĕнĕлĕхсемпе тан пырса райпора паян производство ĕçĕ анлă сарăлнă. Акă, Лантăшпа Отарккă пекарнисене пĕрлештерсе уçнă "Моргаушхлеб" чикĕллĕ яваплăхлă общество çулталăк пуçланнăранпа 295 тонна çăкăр пĕçернĕ. Кун уттинчен юлманскерсем хăйсем кăларакан ассортимента самай пысăклатнă та паян кунтан 22 тĕрлĕ продукци тухать. Çак производство обществи çумĕнчи çĕвĕ цехĕ те аталану çулĕнчен юлмасть. Райпо çĕвĕçисем çулталăк пуçланнăранпа 740 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Мĕн йышлă коллектив пурнăçлать-ха асăннă ĕçсене? Хуравĕ пысăках мар. Паянхи куна райпора 391 çын ĕçлет. Вăл шутран суту-илӳре – 215 çын, обществăлла апатланура – 56 ĕçчен, 5 хатĕрлевçĕ, промышленноç предприятийĕсенче – 48 çын тата 26 водитель.

Муркаш райпо Канашĕн ертӳçи Б.В.Андреев алă усса лармастпăр пулсан та, ĕçлемелли татах нумай-ха, тени райпо пĕр вырăнта тăманни, вăл тăтăшах шыравра пулни пирки калать. Çак шухăшпа уйрăлтăм райпо ĕçченĕсенчен.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**





***Мăн Сĕнтĕрти "Дружба" магазин Мăн Сĕнтĕр райповĕнче ырă ятлă коллективсенчен пĕри. Кашни уйăхрах кунта вăтамран 300 пин тенкĕлĕх тавар сутаççĕ. Иртнĕ уйăхра та вĕсем умри тĕллевсене 2 хут ытла пурнăçларĕç. Н.А. Черновапа Н.С. Перцева сутуçăсем тавар туянакансемпе яланах таравăт.***
**Л. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Районти иккĕмĕш спартакиада иртрĕ

# Маттуррисем мала тухрĕç

Муркашри вăтам шкул стадионĕнче иртрĕ ĕçпе кану лагерĕсен иккĕмĕш спартакиади. Чăн-чăн уяв – сывлăхпа спорт уявĕ пулчĕ вăл. Ĕçпе кану лагерĕсен 12 команди тата çул çитмен ачасен ĕç бригадисен 8 команди хутшăнчĕ спартакиадăна.

Питĕ хаваслă тата илемлĕ стадион, нихçанхинчен те савăк кĕвĕ, ача-пăча шăв-шавĕ. Кашни команда хитрелетсе ӳкернĕ, лагерь пурнăçĕ çинчен тĕплĕн каласа кăтартакан стена хаçачĕсем илсе килнĕ. Кашни командăн хăйĕн символики, девизĕ. Кашни спортсмен çĕнтерес тĕллевлĕ.

Сакăр тĕрлĕ енпе иртрĕ кĕрешӳ. Чи çивĕччисем, чи хастаррисем, вăйлисем пухăннăран çăмăл пулмарĕ Федор Александрович Рылин судьяна.

Çĕнтерӳçĕ-команда ятне тивĕçме тата куçса çӳрекен кубоксене илме ăмăртусенче чи мала тухса çул çитмен ачасен ĕç лагерĕсем хушшинче Муркашри вăтам шкул команди, ĕçпе кану лагерĕсем хушшинче вара Орининти вăтам шкул команди тивĕçрĕç.

Ĕç лагерĕсен командисем хушшинче Орининти вăтам шкул тата Нискассинчи вăтам шкул, ĕçпе кану лагерĕсем хушшинче Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулпа Нискассинчи вăтам шкул командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç, хаклă парнесем илме тивĕç пулчĕç.

Унсăр пуçне спортăн тĕрлĕ енĕпе вăй виççе çĕнтернĕ командăсем те районти вĕрентӳ пайĕн парнисемпе грамотисене тивĕçрĕç.

Ачасене спартакиада питĕ килĕшрĕ. Вĕсем çитес çул татах тĕл пулма, вăй виçме, çĕнтерме пухăнас кăмăллă.

**Т. ЕГОРОВА,**
**вĕрентӳ пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Прошу откликнуться тех, кто заключал договор ООО «Терра» на межевание земельного участка. Телефон: 8-908-840-78-22. Звонить после 18 ч. 63-21-08.**
**1-2.**

**Продаю жерди, подтоварники. Принимаем заказы. Тел.: 8(241)34-3-71; 8-906-383-66-55. д. Москакасы.**

**В связи с предстоящим 65-летием разгрома фашистских войск под Москвой Управление ПФР в Моргаушском районе проводит уточнение списков лиц, награжденных медалью «За оборону Москвы».**
**Управление ПФРпросит граждан, имеющих указанную награду, обращаться по телефону 2-18-91 или в Управление ПФР по адресу: ул. 50 лет Октября, д. 23 а.**

**Продаю квартиру пл. 65 кв. м. по улице Парковая с. Моргауши. Телефон: 8-903-066-47-37.**

**В сказочном красивом бору села Большое Карачкино Моргаушского района по улице Лесной продается терем со зрелым садом и надворными постройками.**
**Обращаться по тел.: 2-18-01, 2-16-63, 8-845-377-35-83.**
**2-2.**

**КПКГ «Агрокредит»**
**краткосрочные**
**ЗАЙМЫ**
**до 20 000 руб., 5 % в месяц**
**Ул. 50 лет Октября, д. 23, офис 201 (в здании сельхозтехники)**
**Тел. 2-18-13**
**2-5.**

**КПКГ «Агрокредит»**
**Приглашаем пайщиков**
**Хранение сбережений**
**3 мес. - 14 % 12 мес. - 20 %**
**6 мес. - 17 % 24 мес. - 25%**
**12 мес. («Пенсионный») - 21%**
**Потребительские займы**
**до 20 000 руб., 5% в месяц**
Свид. о гос. рег. 6612441197 от 28.08.2001г.
**с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 (здание сельхозтехники)**
**Тел. 2-18-13**
**1-10.**

**В магазине «Василек», на территории Моргаушского рынка, широкий выбор сотовых телефонов, аксессуаров, бытовой техники. Кредит 0 % без первоначального взноса. Закачка мелодий, картинок, видеороликов, игр, прошивка сотовых телефонов. Низкие цены. Мы рады видеть Вас в нашем магазине. 2-3.**

**Продаю блоки керамзитобетонные 20х20х40 (также и цветные), песок речной, гравмассу, цемент, шифер, рубероид. Доставка по Моргаушскому району бесплатно.**
**Требуется водитель на ГАЗ-53 самосвал. Обращаться по телефонам: 2-18-80, 8-903-379-16-62, 8-960-308-28-01. Андрей. 2-2.**

**ГУП ЧР «Птицефабрика «Моргаушская» требуются операторы по обслуживанию птицеводческого оборудования. Оплата труда сдельно-премиальная. Возраст до 45 лет. Телефон: 2-25-37. 2-2.**


Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн администрацийĕ район архитекторĕнче нумай çул ĕçленĕ А.Н. Кузнецовăн

**МĂШĂРĔ**

вилсе кайнă пирки чĕререн хурланса пĕлтерет.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта хирург пулса ĕçлекен Ю.А. Кузнецовăн амăшĕ тата Г.Н. Кузнецова реаниматологăн хуньамăшĕ

**Раиса Егоровна**
**КУЗНЕЦОВА**

вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

### Юбилей

# Туслă та пысăк çемье пуçĕ



В.Н. Николаев Анатри Панкли ялĕнче çуралнă. Тăван тавралăх илемĕ ăна ачаранах тыткăнланă: Сурăм шывĕ, вăрман, улăх-çарансем...

Василий вăрмантах çу каçнă темелле. Вăл лесникăн ĕнисене пăхнă. Çакăнтан тĕвĕленнĕ пулĕ ĕнтĕ унăн çут çанталăка юратасси.

В.Н. Николаев салтака кайса килет. Тăватă çул çурă культура ĕçченĕ пулса вăй хурать. Çавăн чухне пулас мăшăрĕпе Маргарита Якимовнапа паллашать. Сăпайлă Матьăк хĕрĕ Вăрнарти совхоз-техникумран вĕренсе тухнă та Йӳçкассинчи сысна фермин ертӳçинче ĕçленĕ.

Тăван тавралăха юратни çĕнтерет. Василий Наумович 1981 çултанпа лесник пулса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе 120 гектар вăрман лартнă. Патшалăх вăрман фондне 100 гектар çинче çĕнетнĕ. Василий Наумович обществăлла ĕçре те хастар. Иртнĕ çулхи октябрьте ăна ентешĕсем Йӳçкасси ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕн депутатне суйланă. Вăл вырăнти художество пултарулăх коллективĕн активлă членĕ.

Ĕçне кура – хисепĕ. В.Н. Николаева ЧР Вăрман хуçалăх агентствин, опытлă вăрман хуçалăхĕн, район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе наградăланă. Вăл "Х лет службы в гослесохране РФ", "ХХ лет службы в гослесохране РФ" паллăсене те тивĕçнĕ.

Василий Наумович мăшăрĕпе Маргарита Якимовнапа пилĕк ача пăхса ӳстереççĕ. Виçĕ хĕрĕ – Мария, Надежда, Светлана – Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчен вĕренсе тухнă. Хăйсен специальноçĕпе ĕçлеççĕ. Алексей ывăлĕ университетăн экономика факультечĕн 4 курсне пĕтерчĕ. Иван ывăлĕ кунти географи факультечĕн 1-мĕш курсне питĕ лайăх паллăсемпе вĕçлерĕ.

Николаевсен пысăк та туслă çемйи çак кунсенче çемье пуçне 50 çул тултарнă ятпа саламласа çирĕп сывлăх, телей, ĕçре ăнăçусем сунать.

**А. ИВАНОВ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: В.Н. Николаев лесник.**


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета "ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-гл. редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа.
Тираж 3391.
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 30.06.2006 г.
Заказ 2214
Дежурный по номеру СУВОРОВА О.Ф.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.